28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1946 НОЯБРЬ 22 КĔÇНЕРНИКУН 226 (6977) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховнăй Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

Вăрман хатĕрлевĕнчи социализмлă ăмăртăва анлăн сарса ярар

Вăрман хатĕрлевĕн кĕркуннепе хĕллехи сезонĕ пуçланчĕ. Халĕ вăрçă чарăннă хыççăн Тăван çĕршывăн халăх хуçалăхне çирĕплетес тата ăна малалла аталантарса пырас ĕçре вăрман промышленноçĕ уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăрать. Йывăç нумай пулсан, пирĕн çĕршывра çĕркăмрăкĕ те, руда та, хут та, строительство материалĕсем те ытларах пулĕç, вара транспорт та лайăхрах ĕçлĕ, хуласемпе ялсенчи пурăнмалли çуртсем те хутшăнса пырĕç.

СССР Совнаркомĕ пирĕн республикăна 1945—1946 çулсенчи кĕркуннепе хĕллехи сезонра вăрман хатĕрлесе парас тĕлĕшпе çирĕп задани парчĕ. Иртнĕ çулхипе танлаштарсан, кăçал çав задани тăрăх хатĕрлесе памалли йывăç сортименчĕ чылай ытларах. Кăçалхи вăрман хатĕрлевĕнче пирĕн чугун çул транспорчĕ валли, сăрт-ту промышленноçĕпе çĕркăмрăк промышленноçĕ валли, авиаци валли, фанерăсем тумалли тата ытти тĕрлĕ паха йывăç материалĕсем хатĕрлесе памалла.

Правительство панă çак çирĕп задание пурнăçлама кăçал пирĕн татах та пысăк майсем пур. Вăрманпромхозсемпе вăрман хуçалăхĕсене кăçал транспорт та, ытти тĕрлĕ техникăлла хатĕрсем те нумай хутшăнчĕç. Вăрман касакан мастерсемпе рабочисен кадрне Хĕрлĕ Çар ретĕнчен таврăннă квалификациллĕ рабочисем йышлăлатрĕç. Кунсăр пуçне вăрман хатĕрлес ĕçе колхозниксемпе колхозницăсене лашапа тата çуран ĕçлеме ĕçукçи тÿлесе явăçтараççĕ. Çапла ĕнтĕ кăçал лайăх ĕçлемелли майсем пысăк, çав майсемпе пурне те туллин усă курмалла.

Иртнĕ çул вăрман хатĕрлекен организацисем хăйсен ĕç хатĕрĕсемпе, уйрăмах техникăллă хатĕрсемпе, çителĕксĕр усă курчĕç. Анчах ку çитменлĕхсем кăçал та хăшпĕр вырăнсенче пурри сисĕнет. Киреки вăрман пунктĕнче электричествăпа ĕçлекен 4 пăчкăна, Улатăр вăрманпромхозĕнче бензинпа ĕçлекен мотора ку тарана çитсе те ĕçлеттерме шутламаççĕ. Техникăллă хатĕрсем çине çакăн пек пăхнине республикăри ытти хăшпĕр вăрманпромхозсемпе вăрман хуçалăхĕсенче те тĕл пулма пулать. Асăннă организацисен руководителĕсем хăйсен айăпне: «Пирĕн техникăллă хатĕрсемпе ĕçлеме пĕлекенсем çук», тесе сирсе ярасшăн. Çакă вăл вăрман хатĕрлес ĕçĕн хăвăртлăхне чăрмантарса пыракан сиенлĕ те хирĕçле шухăш.

Çавăн пекех транспорт хатĕрĕсемпе усă курасси те вăрман хатĕрлевĕнче тивĕçлĕ вырăнта мар. Иртнĕ çулхи вăрман хатĕрлевĕнче Чăваш АССР Вăрман Халăх Комиссариачĕн автомашинăсемпе тракторсен паркĕ вăрман турттарас плана пурĕ те 45 процент çеç тултарнă. Çакă вăл автомашинăсемпе, тракторсемпе ĕçре йĕркеллĕ усă курманнинчен, вăрман турттармалли çулсене кирлĕ пек юсаса йĕркелеменнинчен килнĕ. Канаш вăрманпромхозĕнче пурĕ 5 автомашина, анчах паянхи куна вĕсенчен виççĕшĕ кăна вăрман хатĕрлевĕнче ĕçлеççĕ.

Ноябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа вăрман хатĕрлес ĕçе массăллăн тытăнма пур колхозсене те ĕç вăйĕпе туртăм вăйĕ уйăрса яма хушнă. Анчах çак ĕçе чылай районсенчи колхозсем ытла та вăраххăн туса пыраççĕ, хăйсене панă заданисене пурнăçламаççĕ.

Вăрман хатĕрлевĕнче ĕçе тĕрĕс организацилени пысăк вырăн йышăнса тăрать. Ăçта вăрман хатĕрлекен организацисем сезона кирлĕ пек хатĕрленсе çитмен, ăçта транспорт тата ĕç хатĕрĕсене юсаса йĕркене кĕртмен, унта халех хатĕрленÿ ĕçĕсене туса çитермелле. Транспорт хатĕрĕсем: автомашинăсем, тракторсем, паровозсем пурте юсавлă пулччăр, вăрман турттармалли çулсем яланах йĕркеллĕ пулччăр. Вăрман хатĕрлевĕнче ĕçлекенсен бригадисемпе звенисене туса, вĕсене делянкăсем уйăрса памалла. Кирлĕ ĕç хатĕрĕсемпе инструментсем çирĕплетсе, çирĕп заданисем парса тухмалла. Электричествăпа тата моторпа ĕçлекен пăчкăсене пĕр чăрмасăр ĕçлеттермелле тăвас пулать, алăпа ĕçлекен пăчкăсемпе те туллин усă курмалла. Вăрманта ĕçлекенсене ĕçре тĕрĕс вырнаçтарса тухса, вĕсене ĕçе вĕрентсе пырас пулать. Уйрăмах халиччен вăрманта ĕçлемен çамрăк рабочисене ĕçе вĕрентес тĕлĕшпе ытларах ĕçлени кирлĕ. Ку тĕлĕшпе вĕсене квалификациллĕ рабочисем çумне çирĕплетсе тухас пулать.

Кăçалхи вăрман хатĕрлевĕ мирлĕ условисенче пулса иртнĕ май, вăрманта ĕçлекенсене, иртнĕ çулсемпе танлаштарсан, лайăхрах условисем туса памалла. Рабочисем пурăнакан общежитисем ăшă та таса пулччăр, столовăйсенчи апат пахалăхĕ те лайăх пултăр. Çак ĕçсемшĕн пĕтĕмпех вăрманпромхозсемпе вăрман пункчĕсен руководителĕсем ответлă пулса тăраççĕ.

Вăрман хатĕрлевĕн планне ăнăçлăн тултарасси рабочисем хушшинчи политикăллă тата культмассăллă ĕçе мĕнле йĕркеленинчен те нумай килет. Çавăнпа вăрман хатĕрлес тĕлĕшпе ĕçлекен организацисенчи партипе комсомол тата профсоюз организацийĕсен ку тĕлĕшпе мĕнпур вăя хурса ĕçлемелле. Рабочисем хушшинче кулленех политикăлла калаçусем ирттермелле, хаçат-журналсем вуласа памалла, радио ĕçне, концертсем парассине, кино кăтартассине йĕркелемелле. Пур клубсен те, общежитисенчи хĕрлĕ кĕтессен те хăйсен ĕçне çак вăхăтра нихçанхинчен те лайăхрах туса пымалла. Çак пур ĕçсене те СССР Верховнăй Советне суйлама хатĕрленес ыйтупа тÿччăн çыхăнтарса туса пырас пулать.

Вăрман промышленноçĕнче ĕçлекенсен республикăри канашлăвĕ çĕршыва ытларах вăрман хатĕрлесе парас шутпа вăрман ĕçĕнчи мĕнпур работниксене, колхозниксемпе колхозницăсене СССР Верховнăй Совечĕн суйлавĕсен ячĕпе социализмлă ăмăртăва тухма чĕнсе каларĕ. Республикăри вăрман ĕçĕнче ĕçлекенсем çак чĕнĕве пысăк кăмăлпа хапăл туса йышăнчĕç. Буинскри вăрманпромхозĕнче ĕçлекен Тарасовпа Героев вăрман касакансем хăйсен заданийĕсене кулленех 200 процента яхăн тултарса пыраççĕ. Çак паха ĕç опычĕсене ытти рабочисем хушшине сарса пымалла, вĕсен паха ĕç опычĕсем ыттисемшĕн пример пулса тăччăр.

СССР Верховнăй Совечĕн суйлавĕсем ячĕпе пыракан социализмлă ăмăртăва анлăн сарса пырса кĕркуннепе хĕллехи сезонри вăрман хатĕрлевĕн планне срокчен тултарар! Тăшмана хирĕç паттăррăн кĕрешсе çĕнсе илнĕ хамăрăн çĕнтерÿсене çирĕплетме çĕршыва вăрман продукцийĕ нумай кирлĕ. Çавăнпа та мĕнпур вăя çĕршыва ытларах та ытларах вăрман хатĕрлесе парас ĕçе мобилизацилер!

РЕСПУБЛИКĂРА ГОСУДАРСТВĂНА ТЫРĂ ПАРАС ĔÇ НОЯБРĔН 20-МĔШЕ ТĔЛНЕ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

(процентпа)

РАЙОНСЕМ	Тырă панă
1. Вăрмар	109,5
2. Етĕрне	102,7
3. Советски	100,9
4. Сĕнтĕр	100,5
5. Чурачăк	100,0
6. Красноармейски	99,4
7. Элĕк	98,8
8. Муркаш	97,3
9. Çĕрпÿ	96,8
10. Шăхасан	96,7
11. Калинино	95,5
12. Шупашкар	93,9
13. Сĕнтĕрвăрри	93,7
14. Елчĕк	89,4
15. Пăрачкав	87,6
16. Октябрьски	85,8
17. Ишлей	85,1
18. Вăрмар	83,8
19. Канаш	82,7
20. Йĕпреç	80,8
21. Комсомольски	80,8
22. Куславкка	80,6
23. Хĕрлĕ Чутай	75,3
24. Чкаловски	74,8
25. Улатăр	74,6
26. Первомайски	74,3
27. Тăвай	68,3
28. Çĕмĕрле	66,8
29. Шăмăршă	60,2
30. Кувакино	47,4

Советски, Сĕнтĕр тата Чурачăк районĕсем государствăна тырă парса татнă

СОВЕТСКОЕ, ноябрĕн 21-мĕшĕ. (ТЕЛЕФОНПА). Районри колхозниксем государство умĕнчи чи малтанхи тивĕçе пурнăçлассишĕн тăрăшса ĕçленине пула, ноябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне колхозсем государствăна тырă парса татрĕç.

Халĕ планран иртерсе Хĕрлĕ Çар фондне тырă параççĕ.

К. КУДРЯШОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

* * *

СĔНТĔР, ноябрĕн 21-мĕшĕ. (ТЕЛЕФОНПА). Районри колхозсем, ВКП(б) Чăваш Обкомĕн XXIV-мĕш пленумĕ йышăннă решение пурнăçа кĕртсе, ноябрĕн 19-мĕш тĕлне государствăна тырă памалли плана тултарчĕç.

Халĕ планран иртерсе Хĕрлĕ Çар фондне тырă параççĕ.

ВКП(б) райкомĕн секретарĕ
С. СОКОЛОВ.

Райисполком председателĕ
И. СВЕШНИКОВ.

Нарномзагăн районри уполномоченнăйĕ
П. СОКОЛОВ.

* * *

ЧУРАЧĂК, ноябрĕн 21-мĕшĕ. (ТЕЛЕФОНПА). Районри колхозсем, хăйсем илнĕ обязательствăна тултарассишĕн тăрăшса ĕçлесе, ноябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне государствăна тырă парса татрĕç.

Халĕ районри колхозсем планран иртерсе Хĕрлĕ Çар фондне тырă параççĕ.

Ф. РОМАНОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Союз Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен округсенчи суйлав комиссисен составне кандидатсем тăратаççĕ

Союз Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен округсенчи суйлав комиссийĕсен составне кандидатсем тăратаççĕ.

Шупашкарти суйлав комиссийĕн составне Осоавиахимăн Сĕнтĕр районĕнчи организацийĕ ВКП(б) Сĕнтĕр райкомĕн çар ĕç отделĕн заведующине Павел Никитич Столярова кандидата тăратнă. Столяров юлташ—Отечественнăй вăрçă участникĕ, ăна «Хĕрлĕ Çăлтăр» орденпа тата «Ленинграда хÿтĕленĕшĕн» медальпе наградăланă. Октябрьски районри «Дружба» колхоз членĕсен пухăвĕ колхозница-стахановкăн Анна Павловна Кокшевойăн кандидатурине тăратнă. Çĕрпÿ районĕнчи госучреждени работникĕсен профессиллĕ союзĕн райкомĕ Лĕпсер ял Совечĕн исполкомĕн председательне Александра Федоровăна кандидата тăратнă.

Шăхасан районĕнчи пуçламĕшпе вăтам шкулсенчи учительсен профсоюзĕн райкомĕ Канашри суйлав комиссийĕн составне Шăхасанти вăтам шкулăн учительницине Калерия Лукинична Абрамовăна кандидата тăратнă. ВЛКСМ Вăрмар райкомĕ суйлав комиссине комсомол райкомĕн иккĕмĕш секретарĕн Мария Павловна Павловăн кандидатурине тăратнă. Тăвай районĕнчи Ленин ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕн колхозникĕсем колхоз счетоводне Мария Семеновна Семеновăна кандидата тăратнă. Канаш районĕнчи «Красная пламя» артелĕн колхозникĕсем уйхир бригадин бригадирне Анна Семеновна Щипцовăна кандидата тăратнă. Канаш районĕнчи вăрманпа сулă работникĕсен профсоюзĕн райкомĕн пленумĕ суйлав комиссине Евдоким Федорович Федоров кандидатурине тăратма йышăннă. Федоров юлташ—Сиккаси лесничествин лесничийĕ, лайăх производственник.

Çĕмĕрлери суйлав комиссине кандидатсем тăратас тĕлĕшпе рабочисемпе служащисен тата колхозниксен пухăвĕсем пулса иртнĕ. ВКП(б) Çĕмĕрле райкомĕ районри коммунистсен организацийĕнчен суйлав комиссине ВКП(б) райкомĕн пĕрремĕш секретарьне Вадим Петрович Чернова кандидата тăратнă. Çĕмĕрлери поликлиникăра ĕçлекен медицина работникĕсен пухăвĕ Чăваш АССР-ĕн тава тивĕçлĕ врачне Людмила Михайловна Архангельскаяна кандидата тăратнă, Архангельская юлташ 22 çул хушшинче чирлĕ куçсене 8.000 хут ытла операци тунă, 2.000 çынна ытла куракан тунă; Архангельская юлташа Правительство «Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав» орденĕпе наградăланă. Çĕмĕрлери комбинат коллективĕ суйлав комиссийĕн составне цех начальникĕн заместительне Николай Сергеевич Балашева кандидата тăратнă. Ĕççыннин депутачĕсен Çĕмĕрле райсовечĕн исполкомĕ çумĕнчи госучреждени работникĕсен профсоюзĕн членĕсем хăйсен пухăвĕнче райплан председателĕн Михаил Дорофеевич Дорофеевăн кандидатурине тăратнă, Дорофеев юлташ—орденоносец, Отечественнăй вăрçă участникĕ. Элĕк районĕнчи «Сунтал» ялхуçалăх артелĕн колхозникĕсем суйлав комиссийĕн составне колхоз председателĕн Иван Михайлович Михайловăн кандидатурине тăратнă; колхоза лайăх ертсе пынăшăн Михайлов юлташа Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăланă.

Улатăрти суйлав комиссине кандидатсем тăратас тĕлĕшпе пухнă пухусем пысăк çĕкленÿпе иртнĕ. Чкаловски районри пуçламĕшпе вăтам шкулсенчи учительсен профсоюзĕн райкомĕ суйлав комиссине чаплă учительницăн Раиса Александровна Раськинăн кандидатурине тăратнă, Раськина юлташ Патăрьелĕнчи педагогика училищи çумĕнчи пуçламĕш шкулăн заведующийĕ, ăна «Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав» орденĕпе наградăланă. Чкаловски районри Ворошилов ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕн колхозникĕсем колхоз председательне Василий Макарович Макарова кандидата тăратнă. ВКП(б) Йĕпреç райкомĕ суйлав комиссийĕн составне районри коммунистсен организацийĕнчен ВКП(б) Обкомĕн Йĕпреç вăрманпромхозĕнчи парторгне Георгий Алексеевич Алексеева кандидата тăратнă. Первомайски районри госучреждени работникĕсен профсоюзĕн членĕсен пухăвĕ суйлав комиссине ĕççынни депутачĕсен Тат-Шурут ял Совечĕн исполкомĕн председательне Зейнап Амельдиновна Фейзовăна кандидата тăратнă.

Национальноçсен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен округсенчи суйлав комиссисен составне кандидатсем тăратаççĕ

Национальноçсен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен округсенчи суйлав комиссисен составне кандидатсем тăратас ĕç малалла пырать.

Октябрьски районри Чăрăшкасси ял Советĕнчи Киров ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕнчи колхозниксем Шупашкар ял суйлав округĕн составне колхоз счетоводĕн Трофим Георгиевич Вольский кандидатурине тăратнă. Октябрьски районри Сталин ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕнчи колхозниксем колхоз членне Илья Архипович Охилькова кандидата тăратнă.

Сĕнтĕр районĕнчи коммунистсен организацийĕнчен Шупашкар хула суйлав комиссин составне ВКП(б) райкомĕн пĕрремĕш секретарне Сергей Афанасьевич Соколова кандидата тăратнă. Вăрманпа сулă профсоюзĕн Чăваш Обкомĕн президиумĕ суйлав комиссин составне Вăрман Халăх Комиссариачĕн производствăпа техническя пайĕн начальникне Владимир Иванович Зорин орденоносеца кандидата тăратнă. 1905 çулхи революци ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕн колхозникĕсем колхоз председателĕн Валентин Георгиевич Елагинăн кандидатурине тăратнă.

Комсомольски районри Осоавиахимăн оргбюровĕ Чкаловски округри суйлав комиссин составне Комсомольски райвоенкоматра ĕçлекен Совет Союз Геройĕн Федор Николаевич Черновăн кандидатурине тăратнă. Пуçламĕш тата вăтам шкулсенчи учительсен профсоюзĕн Чкаловски райкомĕ Чкаловски районри çутĕç пайĕн заведующине Илья Николаевич Николаева тата Патăрьелĕнчи çичĕ çул вĕренмелли шкул директорне Олимпиада Михайловна Сорокинăна кандидата тăратнă. Чкаловски районри комсомол организацийĕнчен ВЛКСМ Чкаловски райкомĕн пĕрремĕш секретарĕн Петр Максимович Симуковăн кандидатурине тăратнă. Чкаловски районри «Красный Октябрь» ялхуçалăх артелĕнчи колхозниксем колхоз председателĕн Хуснетдин Сейфутдинович Булатов кандидатурине тăратнă. Ăна «Ĕçре палăрнăшăн» медальпе тата Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăланă.

Икĕ ял Советĕнчи икĕ тĕслĕх

ЕЛЧĔК. Çĕнĕ Пава ял Советĕнче суйлавçăсен хисепĕ пысăк. Суйлав Положенийĕ тăрăх, кунта икĕ суйлав участокĕ пулмалла. Çавăнпа кунта агитаторсен ытларах ĕçлеме тивет. Анчах та ку ял Советĕнчи колхозсенче суйлав законне вĕрентес тĕлĕшпе питĕ начар ĕçлеççĕ. Çĕнĕ Паварн парторганизаци çуменче агитколлектив тунă, кунта 17 агитатор. Анчах агитколлективăн суйлавçăсем хушшинче ĕçлес тĕлĕшпе нимĕнле план та çук, çапла вара агитаторсем ку таранччен мĕн ĕçленине никам та пĕлмест.

Агитаторсене уй-хир бригадисемпе фермăсем çумне çирĕплетнĕ. Анчах ку таранччен пĕр агитатор те ĕçе тытăнман. Колхозниксен СССР Верховнăй Советне суйламалли Положение вĕренес хавхаланăвĕ пысăк. Вĕсем ку ыйтупа сăмах пуçарсан, темĕн чухлĕ ыйтусем парса ыйтса пĕлме тăрăшаççĕ.

„Ново Чурино" колхозра агитатор пулса ĕçлеме вăтам шкул директорне А. Игнатьев коммуниста çирĕплетнĕ. Анчах вăл колхозниксем патне пырса курман. Кунта чылай колхозниксем суйлав хăçан пуласси не те пĕлмеççĕ.

Сăръел ял Советĕнче вара СССР Верховнăй Советне суйлама тĕплĕн хатĕрленеççĕ.

Малтанласа тунă список тăрăх, Сăръелĕнче 470 суйлавçă. Вĕсене суйлав Положенине ăнлантарса парас тĕлĕшпе кашни 10—12 килĕрен пĕрер агитучасток тунă. Суйлава малтанхи хут хутшăнакансем валли уйрăм кружок тунă.

Агитаторсем пулса ĕçлеме 20 коммуниста, 26 комсомолеца тата учительсене çирĕплетнĕ. Вĕсенчен хăшпĕрисем иртнĕ суйлавсем вăхăтĕнче те агитаци ĕçне туса пынă.

Колхозри парторганизаци суйлав Положенине ăнлантарса парас тĕлĕшпе план тунă. Çав план тăрăх, эрнере пĕр хутчен занятисем пулса иртеççĕ. Халĕ агитаторсем 3—4-шер заняти ирттернĕ. Вал занятисенче суйлав Положенин малтанхи сыпăкĕсене, СССР Конституцийĕн суйлав çинчен калакан статьисене тата Сталин юлташăн СССР Конституцийĕн проекчĕ çинчен тунă докладне ăнлантарса панă. Çитес занятисенче Положенин ытти сыпăкĕсене тата Сталин юлташăн Мускаври Сталински суйлав округĕнчи суйлавçăсем умĕнче каланă сăмахне ăнлантарса параççĕ.

Агитаторсем занятисене ирттерме тĕплĕн хатĕрленнине палăртмалла. Кашни заняти умĕн вĕсем семинарта пулаççĕ. Семинарсене колхозри пуçламĕш парторганизаци секретарĕ Сабирзяновпа агитколлектив руководителĕ А. Гаязов юлташсем ирттереççĕ.

Колхозниксем суйлав Положенине вĕренме занятисене йĕркеллĕ çÿреççĕ. Вĕсем çитес суйлав йĕркипе питех те интересленеççĕ. Уйрăмах А. Гаязов, С. Галеев, Ф. Ганеев, Г. Тухватуллин, Ф. Шабируллин агитаторсем занятисене лайăх ирттереççĕ.

Занятисем ирттермелли çуртсене плакатсемпе лозунгсем, партипе правительство руководителĕсен портречĕсене çакса илемлетнĕ. Суйлав Положенин витрини те пур. Суйлав ыйтăвĕпе пĕр номер стена хаçачĕ, бригадăсенче 14 номер боевой листок кăларнă.

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

ПРОМЫСЛА КООПЕРАЦИЙĔН АРТЕЛĔСЕН ĂМĂРТĂВĔ ÇИНЧЕН

Промысла кооперацийĕн артелĕсен октябрь уйăхĕнчи социализмлă ăмăртăвĕн итогĕсене пăхса тухса, Чăваш АССР Совнаркомĕ октябрь уйăхĕнче çак артельсем мала тухнă тесе йышăннă:

1) Сĕнтĕрвăрри райпромсоюзĕн системине кĕрекен Ăстакассинчи „Лесоруб" артель (председателĕ Корнилов юлташ, райисполком председателĕ Маклашкин юлташ).

Çак артель октябрь уйăхĕнчи плана пĕтĕм продукци енĕпе 227 процент, кулленхи кирлĕ таварсем енĕпе 251,1 процент тултарнă.

Ăстакассинчи „Лесоруб" артеле Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне памалла тунă тата ăмăртура мала тухнă работниксене премилеме, вĕсен пурнăç условийĕсене лайăхлатма артеле 8.000 тенкĕ укçа памалла тунă.

2) Чăвашшвейпромсоюз системине кĕрекен Вăрмарти Осипенко ячĕпе тăракан артель (председателĕ Александров юлташ, райисполком председателĕ Биктемиров юлташ).

Çак артель октябрь уйăхĕнчи плана 152,2 процент тултарнă.

Ăмăртура мала тухнă работниксене премилеме тата вĕсен пурнăç условийĕсене лайăхлатма артеле 3.000 тенкĕ укçа памалла тунă.

Чăваш АССР Совнаркомĕ тата Чăвашпромсоюз системине кĕрекен Сĕнтĕр районĕнчи Матикассинчи „Кожевник" артельпе Етĕрнери „Первое мая" артель тата Чăвашдревпромсоюз системине кĕрекен Шупашкарти Лесхимартельпе Çĕмĕрле районĕнчи Тури Камашри артель лайăх ĕçленине палăртнă.

ПУРĂНМАЛЛИ ÇУРТСЕМПЕ КОММУНАЛЬНĂЙ ПРЕДПРИЯТИСЕН СОЦИАЛИЗМЛĂ ĂМĂРТĂВĔН ИТОГĔСЕМ ÇИНЧЕН

Республикăри пурăнмалли çуртсемпе коммунальнăй предприятисен октябрь уйăхĕнчи социализмлă ăмăртăвĕн итогĕсене пăхса тухса, Чăваш АССР Совнаркомĕ октябрь уйăхĕнче Канашри Колхозник çурчĕ (директорĕ Патров юлташ) мала тухнă тесе йышăннă. Канашри Колхозник çурчĕ хăйĕн койкăсемпе усă курмалли октябрь уйăхĕнчи плане 133 процент, тупăшсен планне 130 процент тултарнă.

Социализмлă ăмăртура уйрăмах палăрнă работниксене премилеме Канашри Колхозник çуртне 2.000 тенкĕ укçа памалла тунă.

Чăваш АССР Совнаркомĕ октябрь уйăхĕнче Шупашкарти мунча тата Çĕмĕрлери килен-каянсен çурчĕ иртнĕ уйăхринчен начартарах ĕçленине палăртнă.

Совет çĕршывĕ тăрăх

ÇĂМĂЛ ПРОМЫШЛЕННОСТЬ ВАЛЛИ КВАЛИФИКАЦИЛЛĔ РАБОЧИСЕМ ВĔРЕНТСЕ ХАТĔРЛЕНИ

СССР Çăмăл промышленность Халăх Комиссариачĕ çĕвĕ, атă-пушмак, трикотаж, тир-сăран промышленноçĕсем валли квалификациллĕ рабочисем вĕрентсе хатĕрлекен ФЗО шкулĕсене халь нумайрах уçнă. Хальхи вăхăтра çавăн пек 256 шкулта 20.000 çын вĕренет. Кăçалхи 9 уйăх хушшинче квалификациллĕ 8.700 рабочи вĕрентсе кăларнă, мĕн пурĕ кăçал 10.000 рабочи вĕрентсе кăлармалла.

Лайăхрах вĕрентме пултăр тесе, ФЗО шкулĕсенче вĕрентмелли срока октябрь уйăхĕнчен пуçласа икĕ хута яхăн тăснă.

Кунсăр пуçне тата профессиллĕ-техникăллă 8 шкул уçнă. Çав шкулсем питĕ ăста çĕвĕçсене, закройщиксене тата уйрăм çынсем валли çĕлекен ательесенче ĕçлекен конструктор-модельерсене вĕрентсе хатĕрлеççĕ. Çавăн пек шкулсенче 4 çул вĕренмелле. Вĕсене Мускавра, Ленинградра, Киевра, Минскра, Тбилисире, Ташкентра, Свердловскра тата Дон çинчи Ростовра уçнă.

Трикотаж, арлакан тата атă-пушмак предприятийĕсенче чылайĕшĕнче мастерсен помощникĕсене вĕрентсе хатĕрлекен ушкăнсем тунă (ТАСС).

Ÿкерчĕк çинче: Ялта хулинчи Чехов музейĕ.
Э. ЕВЗЕРИХИН фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники)

«СОВЕТ УКРАИНИ» ЯТЛĂ МАРКАЛЛĂ ПИАНИНĂСЕМ

ОДЕССА, ноябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС) Одессăри музыка инструменчĕсен фабрики пианинăсем тума пуçланă. Хальхи вăхăтра коллектив «Совет Украини» ятлă маркăллă пианинăсем туса кăларма хатĕрленет. Ачасем валли музыка инструменчĕсем, уйрăмăн илсе кăтартсан, сĕрме купăссем тума тытăннă.

КИШИНЕВ ХУЛИНЧЕ ЭНЕРГОПОЕЗД ĔÇЛЕМЕ ПУÇЛАНĂ

КИШИНЕВ, ноябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Совет Молдавийĕн столицинче 3.000 киловат вăйлă энергопоезда ĕçе янă. Вăл хулари предприятисене, коммунальнăй хуçалăха тата пурăнмалли çуртсене электричество энергийĕ талăкĕпех парса тăрать.

СССР-ти Хĕрлĕ Хĕреспе Хĕрлĕ Çурăйăх обществисен Союзĕн исполкомĕнчен

СССР-ти Хĕрлĕ Хĕреспе Хĕрлĕ Çурăйăх обществисен Союзĕн Исполкомĕ çумĕнчи Справкăсем паракан тĕп бюрова вăрçă вăхăтĕнче пĕр хыпарсăр çухалнă çар çыннисем çинчен ыйтса çырнă пирки, Исполком иккĕмĕш хут çапла ăнлантарса парать: Справкăсем паракан тĕп бюро çар çыннисене мар, ахаль граждансене çеç шыраса тупса парать.

Çар çыннисене шыраса тупма ыйтса çырнă заявленисене пурне те Хĕрлĕ Çарăн çухатусене шута илекен управленине янă, малашне çавăн пек заявленисене çав управление ямалла.

СССР КОНСТИТУЦИЙĔ ÇИНЧЕН КАЛАÇУСЕМ

СОВЕТЛĂ СОЦИАЛИЗМЛĂ ОБЩЕСТВО

ХАЛĂХĂН КУЛЛЕНХИ ПУРНĂÇĔНЧИ СОЦИАЛИЗМ

Ĕлĕкрех социализм вăл теори, вĕрентӳ çеç пулнă. Ăна пурнăçа кĕртме май пуррине çукки çинчен тавлашнă. Çав вĕрентĕве ĕçсыннисем хушшинче сарнăшăн патша Российинче айăпласа тĕрмене хупнă е каторгăна янă.

Халĕ ĕнтĕ пирĕн çĕршывра социализма пурнăçа кĕртнĕ. Совет Союзĕнчи халăхсен пурнăçне, кулленхи йăлине вăл çирĕппĕн кĕрсе вырнаçрĕ.

Пурнăçри социализм вăл—эксплоатаци çуккине, çынна çын пусмăрламаннине, ĕçсĕрлĕхпе кĕлмĕçлĕхе пĕтернине, халăх массисен ырлăхĕпе культури тăтăшах ӳссе пынине пĕлтерет. Пурнăçри социализм вăл—çын хăйшĕн те тата хăй пекех ĕçченсенчен тăракан обществăшăн ĕçленине пĕлсе тăни пулать. Социализм вăл—çын обществăн пур прависемпе те усă куракан членĕ, Тăван çĕршывăн тата унăн мĕнпур пуянлăхĕсен чăн-чăн хуçи пулнине пĕлтерет. Пурнăçри социализм вăл—çынна хăйĕн творчествăллă пайĕсемпе пултарулăхĕсене туллин аталантарма май паракан пур çулĕр те уçăмлă пулнине çирĕп шанса тăни пулать.

Çакна ăнланса илни, çакна çирĕппĕн шанса тăни пирĕн пурнăçăн тĕп факчĕсем çинче никĕсленсе тăраççĕ. Ун çинчен Сталин юлташ çапла каласа панă:

«Пирĕн фабрикăсемпе заводсенче капиталистсемсĕр ĕçлеççĕ. Ĕçе халăхран тухнă çынсем ертсе пыраççĕ. Çакна ĕнтĕ пирĕн ĕçри социализм теççĕ. Пирĕн уйхирсенче çĕрĕç ĕçсыннийĕсем кулаксемпе помещиксемсĕр ĕçлеççĕ. Ĕçе халăхран тухнă çынсем ертсе пыраççĕ. Çакна пирĕн йăлари социализм теççĕ, çакна пирĕн ирĕклĕ, социализмлă пурнăç теççĕ».

Сталин юлташăн сăмахĕсем эпир Совет çĕршывĕнче куракан чăнлăхра пĕтĕмпех тӳрре тухаççĕ. Акă, сăмахран, Совет Союзĕнчи паллă çемьене — Коробовсен çемьине илер. Ашшĕ—Н. Г. Коробов вата рабочи-доменщик, 1918 çултанпа Донбасри Макеевкăри заводăн домна цехĕнче аслă мастер пулса ĕçлет. Унăн аслă ывăлĕ Павел, Совет влаçĕ вăхăтĕнче Мускаври Ту-сăрт институтĕнчен вĕренсе тухса, пирĕн çĕршыври чи пысăк предприятисенчен пĕри—Магнитогорскри металлурги комбиначĕн директорĕ пулса ĕçлерĕ, халĕ вăл СССР Хура металлурги Халăх Комиссарĕн заместителĕнче ĕçлет. Вăталăх ывăлĕ Николай, Ту-сăрт институтĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн, Уралпа Хĕвелтухăçĕнчи металлурги промышленноçĕн Главнăй управленин главнăй инженерĕ пулса ĕçлет. Кĕçĕн ывăлĕ Илья, Ту-сăрт институтĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн, Украинăри Петровски ячĕпе тăракан пысăк металлурги завочĕн директорĕ пулса ĕçлет.

Пирĕн промышленноçăн ытти руководителĕсем те халăхран — рабочисенчен, хресченсенчен, интеллигентсенчен тухнă.

Сăмахран тата пирĕн пĕр-пĕр коллективлă хуçалăха—Горький облаçĕнчи Городец районĕнчи Тимирязев ячĕпе тăракан колхоза илер. Ку колхоза 1930 çулта пушă вырăнта организациленĕ. Ун чухне колхозра пĕтĕмпе те 7 кил кăна пулнă. Колхозăн 5 лашапа 3 ĕне пулнă. Халĕ колхоз 425 киле пĕрлештерсе тăрать. Ку колхоз хула пекех туйăнать: унта черепица витнĕ пысăк çуртсем, электростанципе водопровод, клуб, шкул, больница, ача çуратмалли çурт пур. Колхоза ĕмĕрлĕхе усă курма государство акчĕ тăрăх 3.189 гектар çĕр çирĕплетсе панă. Çак çĕрĕн 72 гектар çинче колхоз пахчаçимĕç туса илет, 15 гектар çине сад тунă. Колхозăн 5 ферма пур; таварлă сĕт-çу ферминче 100 ĕне пур. Кунсăр пуçне, сысна, сурăх, кайăк-кĕшĕк тата чи паха рысаксем çитĕнтерекен лаша ферми пур. Колхозăн подсобнăй предприятисем те—çип арманĕ, пăспа ĕçлекен арман, çу çапакан арман, кирпĕч завочĕпе черепица завочĕ, тăмран савăтсапа тăвакан мастерской, çăматпа атă-пушмак тăвакан мастерской, йывăç каскалакан мастерской тата утар пур.

Çак пуян та кăткăс обществăллă хуçалăха кам ертсе пырать-ха? Колхоза вырăнти хресчен И. А. Емельянов, 1901 çулта Медведково ялĕнче çуралнăскер, организациленĕ. Вăлах халĕ унăн председателĕ пулса ĕçлет. Колхозăн ертсе пыракан ытти работникĕсем те вырăнти хресченсенчен тухнă çынсем.

Çакнашкал тĕслĕхсене çав тери нумай кăтартса пама пулать. Вĕсем пурте ĕнте Совет Союзĕнче, большевиксен партийĕ ертсе пынипе, тĕрĕс, социализмлă общество строине туса хунине кăтартса параççĕ. Çав строя тăвас тесе этемлĕхĕн чи лайăх çыннисем ĕмĕрсем хушши ĕмĕтленнĕ, унщăн пирĕн Тăван çĕршыври миллионшар çын хăйсен пуçне хунă.

СОЦИАЛИЗМЛĂ ХАРПĂРЛĂХ

Пирĕн социализмлă обществăн экономика тĕлĕшĕнчи никĕсĕ производство хĕçпăшалĕсемпе средствисем социализмлă харпăрлăх пулни, хуçалăха социализмлă план тăрăх тытса пыни пулса тăрать.

Мĕн вăл социализмлă харпăрлăх?

Сталинла Конституци тăрăх, çĕр, ун ăшĕнчи пурлăхсем, шывсем, вăрмансем, заводсем, фабрикăсем, шахтăсем, рудниксем, совхозсем, машинно-тракторнăй станцисем, банксем, чугун çул, шыв çул тата сывлăш транспорчĕ, çыхăну средствисем (почта, телеграф, телефон, радио), хулари предприятисем тата хуласенчи пурăнмалли çуртйĕрсен ытларах пайĕ **государствăн социализмлă харпăрлăхĕ,** урăхла каласан, **пĕтĕм халăхăн пурлăхĕ** пулса тăрать.

Çакăнтан ĕнтĕ пирĕн çĕршывра мĕнпур производство средствисен **тĕп тата паха пайĕ** государствăн социализмлă харпăрлăхĕ пулни лайăх курăнса тăрать. Çакăн пек ĕнтĕ пирĕн çĕршыври социализмлă харпăрлăхăн **пĕр форми.**

Колхозсемпе кооперации организацийĕсен хуçалăх çуртйĕрĕсемпе предприятийĕсем, вĕсен ĕç хатĕрĕсемпе машинисем, вĕсен ĕç выльăхĕсем, вĕсен выльăх-чĕрлĕх фермисем **кооперацин е колхозăн социализмлă харпăрлăхĕ,** урăхла каласан, уйрăм колхозсен е кооперации организацийĕсен пурлăхĕ пулса тăрать.

Коопераципе колхоз харпăрлăхĕ мĕн тери пысăк вырăн йышăнса тăнине пирĕн çĕршыври хресчен хуçалăхĕсенчен чи ытларахăш пайĕ колхозсене пĕрлешĕнсе тăни те лайăх кăтартса парать. 1940 çулта мĕнпур хресчен хуçалăхĕсенчен 96 проценчĕ колхозра тăнă. Çакăн пек ĕнтĕ пирĕн çĕршыври социализмлă харпăрлăхăн **тепĕр форми.**

Государствăн, коопераципе колхозсен социализмлă харпăрлăхĕ çинче никĕсленсе тăракан социализмлă хуçалăх пирĕн çĕршывра пуçпулса тăрать, вăл халăх пурнăçĕнче татăклă вырăн йышăнса тăрать тата совет гражданĕсен ырлăхĕн тĕп çăлкуçĕ пулса тăрать.

Совет законĕ тăрăх, уйрăм хресченсемпе алăстаçсем хăйсен уйрăм вак хуçалăхĕсене тытса тăма пултараççĕ. Анчах та вĕсен хăйсен хуçалăхне тытса тăрас тесе урăх çынсене тара тытса ĕçлеттерме, урăхла каласан, эксплоатацилеме юрамасть.

Çакăнпа СССР Конституцийĕ пирĕн çĕршывра колхоза кĕрес ĕç кашни çыншăн **хăйĕн ирĕкĕпе** тумалли ĕç пулнине çирĕплетсе парать. Колхоз хăйсемшĕн мĕн тери усăллине ăнланса илеймен хресченсем хăйсен хуçалăхĕсене уйрăм тытса пыма пултараççĕ. Совет законĕ çавăн пек хресченсене çынна эксплоатацилеме çеç чарать. Совет влаçĕ мĕншĕн çакăн пек туни кашни ĕçсыннишĕн ахалех паллă.

Çавăн пекех тата совет законĕ **уйрăм çынсен хăйсен харпăрлăхне** сыхлать. Çакăн пек харпăрлăхсен шутне ĕçлесе илнĕ тупăшсем, перекетленĕ укçа-тенкĕ, пурăнмалли çуртйĕр тата килти ытти хуçалăх çуртйĕрĕсем, выльăх-чĕрлĕх, килте тыткаламалли тĕрлĕрен япаласем, çуртйĕрти пурăнма кирлĕ япаласем кĕреççĕ. Совет законĕ уйрăм çын хăйĕн харпăрлăхне хăйĕн тăванĕсене парса хăвармалли йĕркене те сыхлать. Çапла ĕнтĕ СССР Конституцийĕ кашни гражданин хăйĕн ырлăхне лайăхлатассишĕн тăтăшах тăрăшма пултарнине тата хăйĕн пурлăхне вăл хăйĕн ачи-пăчисене парса хăварма пултарнине çирĕплетсе парать.

Ĕçсыннисемшĕн, пирĕн çĕршывăн, пирĕн государствăн социализмлă харпăрлăх мĕн тери аслă вырăн йышăнса тăнине совет гражданĕсен пурин те тĕплĕн ăнланса илмелле.

Мĕншĕн пирĕн çĕршывра никам та хăйшĕн урăх çынна ĕçлеттерме пултараймасть? Мĕншĕн пирĕн çĕршывра çын ĕçĕ шучĕпе никам та пуяйма пултараймасть? Мĕншĕн пирĕн çĕршывра ĕçсĕрлĕхпе кĕлмĕçлĕх çук? Мĕншĕн пирĕн çĕршыври мĕнпур ĕçсынни массисен пурнăçĕ çулран çул лайăхланса пырĕ тата малашне те пуянрах та культурларах пулса пырĕ?

Мĕншĕн тесен çĕр, ĕç хатĕрĕсемпе машинăсем, заводсем, фабрикăсем, рудниксем, банксем, магазинсем, транспортпа çыхăну хатĕрĕсем, типографисем, шкулсем, библиотекăсем, театрсем, кино, больницăсем, санаторисем тата ыттисем те—вĕсем пурте пирĕн çĕршывра социализмлă харпăрлăх пулса тăраççĕ. Вĕсене пурне те ĕçсыннисене усă парас тата ырлăх тăвас тесе тунă, вĕсем капитализмла çĕршывсенчи пек уйрăм çынсене пуйтармалли предприятисем пулса тăмаççĕ.

Мĕншĕн пирĕн çĕршыв, ĕлĕк кая юлнăскер, çав тери кĕске вăхăтра тĕнчери чи хăватлă державăсенчен пĕри пулса, хăйĕн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне фашистла Германипе унпа пĕр шутлисенчен хӳтĕлесе хăварма пултарчĕ?

Мĕншĕн тесен социализмлă харпăрлăх пирĕн çĕршывра чи хăватлă промышленность, чи тухăçлă шултăра ялхуçалăхĕ тумалли никĕс пулса тăчĕ. Социализмлă харпăрлăх пирĕн çĕршывра çав тери лайăх хĕçпăшалланнă Хĕрлĕ Çара организацилеме пачĕ.

Социализмлă харпăрлăх пирĕн социализмлă общество строине никĕсĕ пулса тăрать. Çакăнта ĕнтĕ унăн вăйĕ, çакăнпа ĕнтĕ вăл производство хатĕрĕсемпе средствисене уйрăм çынсен аллинче тытса тăракан капитализмлă стройран тĕпренех уйрăм тăрать.

(Малалли пулать).

РАЙСОВЕТ ИСПОЛКОМĔН СЕССИЙĔ

ÇĔМĔРЛЕ. Райсовет исполкомĕ хăйĕн черетлĕ сессийĕн ларăвĕнче демобилизаци йĕркипе киле таврăннă çынсене ĕçе вырнаçтарасси çинчен тата Отечественнăй вăрçă инвалидĕсемпе вăрçăра вилнисен çемьисене пулăшу парасси çинчен сӳтсе яврĕ.

Демобилизаци йĕркипе таврăннă нумай çынсене районра ĕçе вырнаçтарнă, çуртсем тума йывăç, вутă, колхозсенче выльăх тата ытти япаласем парса пулăшнă.

Тăватă çул хушшинче çарти çынсен çемьисене 11.950 пин тенкĕ государство пособи, вăрçăра вилнисен çемьисене 2.115 пин тенкĕ пенси, вăрçă инвалидĕсене 3.017 пин тенкĕ пенси панă. Кусемсĕр пуçне, 295 пуç выльăх, 20 пин мăшăр кĕпе-йĕм, 4 пин мăшăр атă-пушмак, 15 пин метр пир-авăр, 1500 кубометр ытла йывăç, 1844 центнер тырă, 1050 центнер çĕрулми парса пулăшнă. Отечественнăй аслă вăрçăра пулнисен çемьисене 8.392 пин тенкĕ тĕрлĕ тӳлевсем чакарнă, 2750 çемьене государствăна тĕрлĕ ялхуçалăх продукчĕсем парас синчен хăтарнă.

Çарта пулнă çынсен çемьисене вăхăтра тата çителĕклĕ таран пулăшу парас тĕлĕшпе «Комбайн» колхоз (председателĕ Осипов юлташ) лайăх ĕçлесе пынă.

Çакăн пек пысăк пулăшу панă пулсан та ку ĕçре çитменлĕхсем те çахалах мар-ха.

Виççĕмĕш группăри инвалидсене 55 çынна ĕçе вырнаçтарман. Комбинат, «Большевик» завод, Мехлеспункт, Чăвашторг уйрăмĕ тата ытти учрежденисемпе предприятисенче инвалидсене, вăрçăра вилнисен çемьисене пулăшас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ.

Доклад хыççăн тухса калакансем райсовет исполкомĕн пайĕсем те çителĕксĕр ĕçленине палăртреç.

Социальнăй обеспечени пайĕн заведующийĕ Умов юлташ ĕçре сайра-хутра çеç пулать. Ялсенчен пынă инвалидсем ăна темиçешер сехет кĕтеççĕ, хăш чухне вăл кунĕпех çухалса пурăнать. Хăйĕн ĕçĕсене йĕркеллĕ туса пымасть. Райсовет исполкомĕнче ĕçлекенсем Умов юлташ ĕçлеме пултарайманнине лайăх пĕлеççĕ, анчах çапах ăна ĕçрен кăлармаççĕ.

Хулара кăна мар, хăшпĕр колхозсенче те ку ĕç çине сӳрĕккĕн пăхни палăркалать. «Победа» колхозра Клочкова колхозницăн тумтирсем çук пирки 3 ачи шкула çӳремеççĕ. Ăна пӳртне витме колхоз улăм та, вутă кăларма лаша та памасть. «Искра» колхозри Годунова юлташăн 4 ача, вĕсем те шкула йĕркеллĕ çӳреймеççĕ. Годунова колхозницăн упăшки фронтра вилнĕ, выльăхсем çук, çапах та ăна колхозран пулăшу памаççĕ.

Çартан таврăннă çынсене, вăрçăра вилнисен çемьисене тата вăрçă инвалидĕсене пулăшу парасси çинчен сесси çирĕп решени йышăнса хăварчĕ. Предприятисемпе колхозсен, учрежденисен руководителĕсене çав решенисене куллен пурнăçа кĕртсе пыма кирли çинчен сесси çирĕп асăрхаттарчĕ.

Ан. ТАНЬКОВ.

КОЛХОЗ ÇИЛ АРМАНĔ

Етĕрне районĕнчи Ту Мучарти Ленин ячĕпе тăракан колхозра çак кунсенче икĕ çил арманĕ юсаса пĕтерне. Халĕ унта колхозниксем тырă авăртма çӳреççĕ.

ВЫЛЯВ УКÇИНЕ ТӲЛЕНИ

ТĂВАЙ. Районри перекет касси кăçал 10 уйăх хушшинче государство заемĕсен облигацийĕсем тăрăх, 366.623 тенкĕ укçа тӳленĕ. Укçапа япаласен 4-мĕш лотерейин билечĕсемпе 62 çынна пысăк вылявсем (икĕ пальто, 3 брюки, 2 кĕмĕл сехет, 3 çынна 10.000-шер тенкĕ укçа) тухнă. Йăнтăрч ял Советĕнчи «Октябрь» колхоз председателĕ Г. Сергеев юлташ 25.000 тенкĕ выляса илнĕ.

Нимĕçсен тĕп вăрçă преступникĕсене суд тума пуçланă

НЮРНБЕРГ, ноябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Ноябрĕн 20-мĕшĕнче вырăнти вăхăтпа 10 сехетре Пĕтĕм тĕнчери çар трибуналĕ ĕçлеме пуçланă. Ку трибунал нимĕçсен тĕп вăрçă преступникĕсене суд тăвать. Трибунал ларăвне трибунал председателĕ Луоренс уçнă. Ларăва уçнă хыççăн Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен тĕп айăплаканĕ Джексон вăрçă преступникĕсене айăпласа çырнин 1-мĕш пайне вуласа панă.

ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ ДАХАУ ЛАГЕРĔНЧЕ ТУНĂ ТИСКЕР ĔÇСЕМ

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед Пресс агентствин корреспонденчĕ гитлеровецсен Дахаури концентрациллĕ лагерĕнчи палачсен судĕнчен пĕлтернĕ тăрăх, пĕр свидетель американецсен çар судне çапла каласа кăтартнă: гитлеровецсем Дахау лагерĕнче ларакансене темле майсемпе те асаплантарнă, сăмахран каласан, вĕсем унти çынсене 38 сехет хушши ытла пăрлă шывра тытнă, вара çавăн чухне вăхăтран вăхăта вĕсен майĕсенчен «наукăллă тĕпчевсем» тумашкăн юн илнĕ. Çав корреспондент малалла çапла пĕлтерет: çав ĕçе тĕпчекен Америка офицерĕсем Дахау лагерĕнчи çынсене мĕнтери хĕнени тата выçăпа асаплантарни çинчен илтсен, тарăхса кайнă.

«Нью-Йорк таймс» хаçат корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, пĕр свидетель американецсен медицина службин полковникĕ Болл суда çапла пĕлтернĕ: Дахау лагерьне хупса лартнă темиçе пин çын хушшинче тиф чирĕ, варвитти тата рожа чирĕ асса кайнă. Болл каланă тăрăх, лагерь çывăхĕнче тăнă поезд çинче темиçе пин çын вилли тупнă. Тепĕр свидетель Шавез полковник суда фотоӳкерчĕксем кăтартнă. Вăл çав фотоӳкерчĕксене Дахау лагерьне Америка çарĕсем пырса кĕнĕ самантра ӳкерсе илнĕ. Фотоӳкерчĕксем çинче çын вилли купиcем курăнаççĕ, тавар турттармалли вагонсемпе крематорисем çын виллисемпе тулса ларнă.

Юнайтед Пресс агентствин корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: тепĕр свидетель Блаха доктор, хăй вăхăтĕнче Прага хулинчи медицина шкулĕнчен вĕренсе тухнăскер, çапла каласа панă: Дахау лагерьне мана 1941-мĕш çулхи апрель уйăхĕнче илсе пычĕç, унта питĕ хытă асаплантаратчĕç. Каярахпа мана çын виллисене касма çĕрте ĕçлеттерчĕç. 1942-мĕш çулхи август уйăхĕнчен пуçласа 1945-мĕш çулхи çуркуннеччен эпĕ хам та 6 пинтен пуçласа 7 пин виле таран касрăм, тенĕ. Малалла вăл çапла каласа кăтартнă: 1942-мĕш çулхи çуркунне эпĕ тыткăна лекнĕ совет çыннисене 6 пинтен пуçласа 8 пине çити куртăм. Çав çынсене пурне те бараксенчен пĕр çĕре илсе кайрĕç те унта пурне те пулеметсемпе персе вĕлерчĕç. Кун хыççăнхи эрнесенче çав вырăнта час-часах пулеметпа пени илтĕнетчĕ. Çавă вăл гитлеровецсем тыткăна лекнĕ совет çыннисене персе пăрахни пулнă. Блаха доктор судра Яролин эсэсовеца палласа илнĕ, çав эсэсовец тыткăна лекнĕ совет çыннисене персе пăрахакансенчен пĕри пулнă.

1944-мĕш çулхи февраль уйăхĕнче нимĕçсем урăх лагерьтен илсе пынă совет студенчĕсен пĕр пысăк ушкăнне персе пăрахнă. Çав çулах сентябрь уйăхĕнче Блаха доктор совет офицерĕсене 100 çынна яхăн курнă, вĕсене пурне те крематорие илсе кайнă, унта вара вĕсене ĕнсерен персе вĕлернĕ те çунтарса янă. Çав офицерсене илсе пыракан эсэсовецсем вĕлернĕ офицерсен çăварĕсенчен ылттăн шăлсене кăлара-кăлара илнĕ.

Свидетель Блаха доктор Руперпа Беткер эсэсовецсене те палласа илнĕ, çаксем иккĕшĕ те малта асăннă совет офицерĕсен ушкăнне хураллаcа пынă. Блаха çапла каласа кăтартнă: Беткер эсэсовецпа тепĕр Маль эсэсовец 1944-мĕш çулта Дахау лагерĕнче ларакан çынсене пумайăшне çакса вĕлернĕ.

Дахау лагерĕнче ларакан çынсене, «наукăллă тĕпчевсем» тăватпăр тесе, тем майлă та асаплантарнă, тем вăхăт хушши сивĕ шывра тăратнă. Сывлăш пусăмне касартăк улăштарнă, çавна пула лагерьте ларакансен нумайăшĕн ăша юн кайнă. Лагерьте ларакансене ирĕксĕр тăварлă шыв ĕçтернĕ. Тĕрлĕ опытсем тума çынсен ӳтне тĕрлĕ пӳр кĕртнĕ, çавăн пек хăтланнă хыççăн çав çынсенчен 90 проценчĕ вилнĕ. Сивĕ чир ертнĕ, ку опытсене гитлерла «профессор» Шиллинг тунă. Çав опытсем хыççăн та питĕ нумай çын вилнĕ. Унти медицина лабораторине вилнĕ çынсен пуçĕсене касса илме тата çав пуçсене врачсемпе СС руководителĕсем патне ярса тăма хушнă.

«ВАРШАВА ПАЛАЧНЕ» МЕЙЗИНГЕРА ФРАНКФУРТА ИЛСЕ ПЫНĂ

ЛОНДОН, ноябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио çапла пĕлтерет: Гитлер полковникне Мейзингера—«Варшава палачне»—ыйтса тĕпчеме ноябрĕн 13-мĕшĕнче самолетпа Майн çинчи Франкфурта илсе пынă. Мейзингер Варшавăри 100.000 еврее вĕлернĕшĕн айăплă. Сентябрĕн 12-мĕшĕнчен пуçласа, Мейзингер Японири Иокогама çывăхĕнчи пĕр лагерьте пурăннă. Вăл Японире 1941 çултанпа пурăннă. Япони союзниксене парăнсан, Мейзингер Америка салтакĕсене парăннă.

МАЙДАНЕК ПАЛАЧНЕ ВĔЛЕРМЕЛЛЕ ПРИГОВОР ЙЫШĂННĂ

ВАРШАВА, ноябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Люблинра Майданекри «вилĕм лагерĕн» крематори начальникĕ пулнă Пауль Гофман гитлеровеца суд туса пĕтернĕ. Ăна 1941 çулхи июль уйăхĕнчен пуçласа 1944 çулхи июль уйăхĕ хушшинче, крематори начальникĕ пулнă вăхăтра, лагере хупса лартнă çынсене алтуйăпне хĕнесе, газпа пăчăхтарса, çакса тата чĕрĕлех кăмакара çунтарса вĕлернĕшĕн айăпланă.

Свидетельсем каласа панă тăрăх, Гитлер палачĕ айăпли пĕтĕмпех тăрă шыв çине тухнă. Пауль Гофмана суд вĕлермелле приговор йышăннă.

ÇУРÇĔР ИРАНРА АЗЕРБАЙДЖАНЕЦСЕНЕ ХĔСĔРЛЕÇÇĔ

ТЕГЕРАН, ноябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Тегеранри хаçатсем Çурçĕр Иранра вырăнти самоуправлени органĕсене суйланă май пулса иртнĕ ĕçсем çинчен пĕлтерӳ пичетлесе кăларнă, ăна вĕсем официальнăй çынсенчен илнĕ пулмалла. Хаçатсем пичетленĕ пĕлтерӳре çапла каланă: Азербайджанран килнĕ хыпарсем тăрăх, азербайджанецсен демократиллĕ партийĕн членĕсем, восстани туса, влаçа хăйсен аллине илме хăтланаççĕ пулать. Малалла унта çапла каланă: азербайджанецсен демократиллĕ партийĕн членĕсен хĕçпăшалллă пĕр ушкăнĕ икĕ кун каялла, хресченсем пулăшнипе, Миандэ патĕнче Тегеранпа Тавриз хушшинчи çула йышăннă, хĕçпăшалланнă çынсен тепĕр ушкăнĕ Мерагэ çывăхĕнчи Аджабшир местечкинче жандармсене тапăннă. Мерагэ районĕнчи Гелькандра хресченсем помещиксене памалли тырра пама килĕшмен, унта жандармсене тапăннă пулать тата ытти те.

Кунта килнĕ хыпарсем тăрăх, ĕç чăннипе çакăн пек пулнă. Юлашки вăхăтра вырăнти самоуправлени органĕсене суйлас тĕлĕшпе кампани сарăлса кайнă май, жандармсем, реакциллĕ çынсем пулăшнипе, темиçе районра (çав шутра Серабепе Мианэре) демократиллĕ организацисене хĕсĕрлеме тытăннă. халăхпа тытăçатытăçа илнĕ, çав халăха Иранран уйăрăлма тăрăшаççĕ тесе пĕр сăлтавсăрах айăплаççĕ. Çавăн пек хĕсĕрлесе, Çурçĕр Иранра демократиллĕ юхăма пусарма тата аркатса тăкма тăрăшаççĕ. Çурçĕр Иранра пуринчен ытлă азербайджанецсем пурăнаççĕ. Вĕсем вырăнти самоуправлени органĕсене суйланă вăхăтра хăйсен наци интересĕсемпе килĕшсе тăракан требованисем кăларса тăратнă, çавăн пек требованисем демократиллĕ пур çĕршывсенче те кăларса тăратаççĕ. Çурçĕр Иранри халăхăн пур сийĕсем те пулнă митингсемпе пухусенче Çурçĕр Иранри азербайджанецсем валли иран чĕлхипе çеç мар, азербайджан чĕлхипе те вĕрентекен шкулсем уçма ыйтнă, вырăнти судсенче халăхăн ытларах пайĕ калаçакан чĕлхепе суд тума ыйтнă т. ыт. те. Çурçĕр Иранри нихăш митингра та, нихăш пухура та, демократиллĕ партин нихăш представителĕ те Иранран уйăрласси çинчен пĕр сăмах та каламан. Ку çеç те мар, пур çĕрте те Иран государствинче пурăнса тумалли ĕçсем çинчен каланă.

Апла пулсан та, Çурçĕр Иранра демократиллĕ юхăм анлăн сарăлса кайнипе хăранă пирки, реакциллĕ çынсем Çурçĕр Иранри азербайджанецсем хушшинче Иранран уйăрăлас шухăш сарăлнине пĕтерсе лартатпăр тесе, азербайджанецсене вăйлă хĕсĕрлеме пуçланă.

Тегеранри хаçатсенче «пăлхавçăсене» хирĕç полици йышăннă мерăсем çинчен пичетлесе кăларнă. Шалти ĕçсен министрĕн заместителĕ Феридуне, генеральнăй штаб начальникĕ Арфа тата полицин тĕп управленийĕн начальникĕ Зараби Тавриз хулине «кирек мĕнле майпа та» йĕрке туса хума хушса приказ янă.

Çав ĕçсене пăлхав тума парас мар тесе тăваççĕ (Иран Азербайджанĕнче пăлхав тума хатĕрленеççĕ имĕш), жандармсене кăшт тытăса-тытăса илнине пысăклатса кăтартаççĕ. «Сепаратистсен» пăлхавĕнчен сыхлатпăр тесе, Çурçĕр Иранри азербайджан халăхĕ хушшинчи демократиллĕ организацисене аркатса тăкма тăрăшаççĕ, çак ĕçре çар чаçĕсемпе усă курăпăр, тесе хăратаççĕ. Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, демократсен руководителĕсене тыта-тыта хупаççĕ. «Эттелаат» хаçат çапла пĕлтерет: Тегеран хулинче демократиллĕ партин деятелĕсене Искандера, Серабие тата Хашем Арина тытса хупнă. Çав çынсем çинчен: вĕсем правительствăна хирĕç пыракан ĕçсем тума хатĕрленнĕ, тесе çыраççĕ.

Колхоз чысĕшĕн

Май уйăхĕнчи лăпкă та хĕвеллĕ кун агитколлектив руководителĕ Миронова васкасах сухаçăсем патне пынă.

— Вăрçă-ă!..—тенĕ те вăл хашкаса.— Вăрçă пĕтрĕ. Германи хĕçпăшал пăрахрĕ.

Агитатор сухаçăсене вăрçăра нимĕçсем пĕр сăмахсăр парăнни çинчен тĕплĕн ăнлантарса панă. Тăватă çул хушши колхозăн анлă уйхирĕнче кунĕн-çĕрĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçленĕ колхозниксем гитлерла Германие чĕркуççи çине лартнăшăн савăнса Хĕрлĕ Çара тав тунă. Çав кунах кăнтăрла иртнĕ хыççăн колхозниксем çĕрулми лартма тухнă.

Вĕсем яланах Хĕрлĕ Çарăн сĕнтерĕвĕсемпе хавхаланса ĕçленĕ. Çуртыррисене планпа пăхнинчен икĕ кун малтан акса пĕтернĕ. Çĕре, яланхи пекех, лайăх сухаланă тата пĕтĕм вăрлăха яровизацилесе акнă.

Колхоз çуракине пур енчен те тĕплĕн хатĕрленсе тухнă. Хĕллехи агротехникăллă мероприятисен планне пур енчен те ирттерсе тултарнă. Колхоза Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне памалла туни ĕçчен колхозниксен хастарлăхне татах та çĕкленĕ. Вĕсем Хĕрлĕ Ялава, ĕçри çĕнтерӳпе илнĕскере, алăран тытса тăрассишĕн, колхоз чысне татах та çӳле çĕклессишĕн ĕçленĕ.

Тухăçлă тырпулшăн кĕрешесси тырпула акса хăварнипех пĕтмест. Колхозниксем акнă тырпула ешĕл те парка ӳсĕр кенскере, лайăх пăхса çитĕнтернĕ. Мĕн пур калчасене апатлантарнă, икĕ хутчен çумласа тасатнă, тырпула пухса кĕртме тимлĕн хатĕрленнĕ. Çĕнтерӳ тырпулне пухса кĕртме хатĕрленнĕ çĕре кашни колхозник хăйĕн вăйне, пултарулăхне пама тăрăшнă.

Кĕтнĕ вăхăт çитнĕ. Пысăк ĕçе тытăниччен колхозниксемпе колхозницăсем партипе правительство тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен йышăннине сӳтсе явнă, канашланă.

Кĕрхи тырриспе çуртыррисене вырма колхозниксем уйрăм участоксем уйăрса илнĕ. Машинăсем йĕркеллĕ ĕçленĕ. Кашниех нормăна икшер хут тултарнă. Çапла вара вĕсем ырашна планпа кăтартнинчен икĕ кун малтан, çуртыррисене—тăватă кун малтан вырса пĕтернĕ. Сентябрĕн 12-мĕшĕ тĕлне пĕтĕм тырпула итем çине кĕртсе çитернĕ. Тырпула хире тăккаласа хăварман.

Лав хыççăн лав хатĕрлев пунктне тырă ăсатнă. Кунĕн-çĕрĕн авăн çапнă. М. Архангельская ертсе пыракан транспорт бригади вăхăта сая яман. Бригадăри колхозниксем—З. Николаева, Л. Иванова, П. Ефимова, С. Макарова çывăрма та, канма та пĕлмесĕр ĕçленĕ. Колхоз пирвайхи тивĕçе пурнăçланă—государствăна срокчен тырă парса татнă.

— Пирĕн Хĕрлĕ Çарăн вăй-хăватне ӳстермелле. Çавăнпа та эпир тăван çара пулăшма тивĕç,—тенĕ колхозниксем, пуртে пĕр шухăш-кăмăллă пулса. Вĕсем вара Хĕрлĕ Çар фондне 230 пăт тырă панă. Çĕрулмине вăхăтра кăларса пĕтерсе государствăна парса татнă, Хĕрлĕ Çар фондне 360 пăт панă.

Сложнăй молотилка кунĕн-çĕрĕн итем çинче шавланă. Халĕ ĕнтĕ колхоз хăйĕн мĕнпур тырпулне, вăрлăхлăх клевера та çапса пĕтернĕ.

Ĕçĕн ăнăçлăхĕ ĕçе план тăрăх туса пынинчен, дисциплина çирĕппинчен килет. Кунта ĕçкунĕсен минимумне тултарман колхозниксем пĕр çын та çук. Колхозниксем ĕçе кар тухаççĕ. М. Архангельская, Е. Зайцева, В. Зайцева, Е. Семенова, А. Иванова, З. Николаева, П. Ефимова, С. Яковлев юлташсем уйхир ĕçĕсенче кăна 250—300 ĕçкунĕ тунă. Колхозниксем пур ĕçре те ăмăртса ĕçленĕ.

Вĕсем вăй-хал хурса ĕçлени ахаль пулмарĕ: тĕштырăсене вăтам шутпа кашни гектартан 14—15 центнер ытла туса илнĕ, сĕлĕ гектартан 21,54 центнер, урпа—17,76 центнер тухнă. Çĕрулми тухăçĕ те планпа кăтартнинчен чылай пысăк.

Колхозниксен ĕçкунĕ йывăр таять. Вĕсене кашни ĕçкунĕ пуçне 6-шар килограмм çĕрулми валеççе панă. Тырпул та 4-шар килограмран кая мар тивет. Çавăн пекех ытти тупăшсене те валеççĕ.

Колхоз государство умĕнчи парăмсене чыслăн пурнăçласа пычĕ. 1945 çулшăн аш-какай, сĕт-çу, çăм, çăмарта, утă, кантăрвăрри, сӳс тата ытти продуктсем памалли обязательствăсене ытлашшипех тултарнă. Колхоз укçа-тенкĕ тĕлĕшĕпе те государство умĕнче парăмлă мар.

Колхоз ялхуçалăх ĕçĕсемпе пĕрлех выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе те пысăк ӳсĕмсем турĕ. Лаша, ĕне, сурăх, сысна, чăх-чĕп ĕрчетмелли плана ытлашшипех тултарнă. Кунта çулсеренех пур кĕсресене те хăмлаттараççĕ. Çавăн пекех выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхĕ те пысăк. Выльăхсене ăша те тутă хĕл каçараççĕ.

Пуçламĕш парторганизаци çумĕнчи агитколлектив колхозниксене партипе правительство решенийĕсене пĕр пăркаланмасăр пурнăçа кĕртсе пыма мобилизацилет. Л. Матвеев, Я. Маслов, Н. Андреев, Н. Миронова агитаторсем тăтăшах колхозниксем хушшинче пулаççĕ. Вĕсене Совет Союзĕнчи пурнăç çинчен, тĕнчери лару-тăру çинчен каласа параççĕ, наука вĕрентĕвĕсемпе паллаштараççĕ.

Çапла ĕçлерĕç кăçал, аслă çĕнтерӳ тунă çул, Чемейри Хĕрлĕ Ялавлă «Сеятель» колхоз членĕсем. Вĕсем ялхуçалăх çулне вĕçлерĕç. Колхоз чысне çӳлте тытса пычĕç.

...Каçхине те правленинче лампа çути курăнать. Колхоз председателĕ Николай Андреев колхоз активĕпе пĕрле кăçалхи ĕçĕн итогĕсене сӳтсе-явнипе пĕрлех, тырпул тухăçлăхне татах та ытларах ӳстересси çинчен канашлать. Вĕсем çитес çулхи вăйлă тырпулăн никĕсне тĕплĕн хывса хăварнă: кĕрхи çĕртме планне ытлашшипех тултарнă, вăрлăхсене пĕтĕмпех хатĕрленĕ, машинăсене юсанă. Чемейсен каллех хĕрӳллĕ ĕç пуçланать.

...Вĕсем Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне çирĕп тытса тăраççĕ.

Яков СИГАЙ.

КОЛХОЗРИ ПĔР-ПĔРНЕ ПУЛĂШАКАН КАССА

ИШЛЕЙ. «Большевик» колхозра пĕрпĕрне пулăшакан касса Отечественнăй вăрçă çулĕсенче те лайăх ĕçлерĕ. Кассăн халĕ 300 пăт тырă тата чылай укçатенкĕ пур. Ĕçлеме пултаракан колхозниксемпе колхозницăсем пурте кассăн членĕнче тăраççĕ.

Тĕрлĕ сăлтавсемпе йывăрлăха кĕрсе ӳкнĕ членсене, колхозра кам мĕн чухлĕ тăрăшса ĕçленине пăхса, касса пулăшу парса пырать. Акă, сăмахран, колхозница М. Никифорова çак касса пулăшнипе хăй семьи валли ĕне туяннă. Пысăк семьеллĕ Ф. Ивановăна касса тырă парса пулăшнă.

Кассăна вăйлатас ыйтупа нумаях пулмасть кунта касса членĕсен пухăвĕ пулса иртрĕ. Пуху кашни членăн çак çулхи икшер ĕçкунĕн тупăшне пĕр-пĕрне пулăшакан кассăна пама йышăннă.

Ответлă редактор заместителĕ Н. С. СТЕПАНОВ.

Завода хуралта ĕçлеме работниксем кирлĕ.

Пĕччен пурăнакан арçынсемпе хĕрарăмсене, 18 çултан пуçласа 55 çула çитнисене илеççĕ.

Илнĕ çынсене укçасăрах тумтир параççĕ, хваттере вырнаçтараççĕ, кунне виçĕ хутчен апат çитереççĕ тата уйăхне 170 тенкĕ укçа тӳлеççĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Чапаевский рабочий поселок, Отдел найма и увольнения. Телефоны 6—99 и 0—26.

Завод дирекцийĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: гор. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0-67, заместителен — 2-89, секретариатăн—4-26, пропаганда пайĕн—2-89, парти пурнăç пайĕн—3-97, промышленность пайĕн—3-99, ялхуçалăх пайĕн—3-99, рабселькорсен пайĕн—0-67, издательство конторин — 0-23.

НТ 00457

Типография № 1 Управления полиграфической промышленности при СНК ЧАССР. Заказ №